К 84.89(=Чув)
Ю64
4-44281

Альбина Юрату

# Алфавит
## а-я



Национальная библиотека ЧР
4-044281

Кур
К84.89(=Чув)
7064

Альбина
Юрату

# Алфавит
# а-Я

Издательство
Перфектум
Perfectum

Шупашкар - 2011

УДК 821.512.111–93
ББК 84 (2 Рос-Чув)6-5
Ю 64

**Альбина Юрату**
(Альбина Васильевна Яковлева-Любимова)

**Алфавит от «А» до «Я»**
Стихи на чувашском языке
Для младшего возраста

Редактор Раиса Сарби
Компьютерный набор - А.В. Любимова
Художник - И. Николаева
Верстка - И. Николаева
Дизайн обложки - И. Николаева

**Юрату. А.**
**Ю 64** Алфавит от «А» до «Я». / А.Юрату.– Чебоксары: Перфектум, 2011. – 44 с.

Подписано в печать 06.10.2011.
Формат 84x108 /16. Бумага офсетная.
Усл. печ. л. 4.27. Заказ К-105.Тираж 3000 экз.

Отпечатано в типографии изд-ва «Перфектум»
428019, г. Чебоксары, пр. И.Яковлева, д.15, оф. 82

Издательство «Перфектум»
428019, г. Чебоксары, пр. И.Яковлева, д.15, оф. 82
e-mail: mail@perfectumbooks.ru

Проверено 1 СЕН 2017

УДК 821.512.111–93
ББК 84 (2 Рос-Чув)6-5

© Юрату А.В., 2011
© ООО «Издательство «Перфектум», 2011

И-44281

# ЭПĔ ПĔЧĔК ИЛЕМПИ

Эпĕ пĕчĕк Илемпи,
Чăваш чунлă хĕр пĕрчи.
Туссемпе эпĕ пуян,
Пурăнатăп пит аван.
Эп упратăп туслăха,
Пуç таятăп халăха.



Эпĕ пĕчĕк Илемпи,
Çут чĕреллĕ хĕр пĕрчи.
Калаçатăп чăвашла,
Юр юрлатăп чăвашла.
Юрататăп аннене,
Аппана та тетене,
Шăллăма та аттене.

Эпĕ пĕчĕк Илемпи,
Пит ĕçчен хĕм-хĕр пĕрчи.
Тасататăп кил-çуртра,
Чечексем пур пахчара.
Тĕр тĕрлетĕп тăрăшса,
Чăваша шав мухтаса.

Эпĕ пĕчĕк Илемпи,
Пит маттур сар хĕр пĕрчи.
Лар-ха, тусăм, ман çума,
Алфавит тыт аллуна.
Вĕренсем эс вулама
Чăвашла «Ӳ»пе «Ç»на,
Эс ан ман «Ĕ»пе «Ă»на...

...Сас палли чи хаклă тус –
Тĕнче алăкне эс уç.
Нихăçан ална ан ус,
Пĕлӳпе шеп тултăр пуç...

## АННЕ

Ир-ирех тӑрать анне,
Ирхи шуҫӑм – куҫӗнче.
Шӑварать чечексене.
Ӗҫ вӗрет ун аллинче –

Тутлӑ кукӑль пӗҫерет,
Сиплӗ чей вӑл хатӗрлет.
Кушака апат парать,
Пуҫӑмран мана шӑлать.

Юрататӑп аннене,
Мухтанап унпа чунра.
Пулӑшатӑп аннене,
Пуҫтаратӑп кил-ҫуртра.

– Эс, аннеҫӗм, ларса кан,
Ал-уру сыв пултӑр сан.
Эпӗ санӑн ик аллу,
Чи илемлӗ йӑл кулу.

## АТТЕ

Ир пуҫласа мӗн сӗм каҫчен
Эс вӑй хуратӑн кил-ҫуртра.
Ҫук, ӗҫлеместӗн эс пӗччен,
Ачу-пӑчу пӗрмай ҫумра.

Ӗҫе вӗрентрӗн ачаран,
Ӑста алра пин ӗҫ ташлать.
Мӑнуксене халь ӑс паран,
Кашни сан пек ӳсме васкать.

Тӑвансемпе атте пуян,
Ун кӗреки ялан тулли.
Ҫӳҫ шуралнишӗн ан кулян,
Аннешӗн эсӗ – чи чапли.



## АСАННЕ

Асаннеҫӗм, асанне,
Юрататӑп эп сана.
Асаннеҫӗм, асанне,
Ытала-ха эс мана.
Хӗвел сӑнлӑ асанне,
Мухтанатӑп эп санпа.
Шӑпчӑк саслӑ асанне,
Савӑнтар-ха юррупа.

Асаннеҫӗм, асанне,
Ёҫрен таврӑнӗ анне,
Алӑка уҫать атте,
Аллинче хитре тетте.
Шӑкӑл-шӑкӑл юптарса,
Куркана чей тултарса
Кукӑле часрах касар,
Юратуллӑн хӑналар.

Чӑвашла шеп каласҫа,
Тӗп йӑха асра тытса,
Аннене чунтан савса,
Аттепе, ай, мухтанса,
Кӗреке тулли ларар,
Йӑлана тытса пырар.
Пӗрле ӗмӗр пурӑнар,
Тӑвана сума сӑвар.





## АСАТТЕ

Аттен ашшӗ асатте
Пит мӑнаҫлӑн курӑнать.
Шап-шур ҫӳҫлӗ мӑн атте
Мана питӗ юратать!

Ӑшӑ чунлӑ асатте
Мана пиллӗн ыталать.
Хитре капӑр ҫӗн тетте
Ыр сунса шав туянать.

Асаттен пур сад пахчи,
Тӗрлӗ ҫимӗҫ ӳстерет.
Эпӗ лартнӑ улмуҫҫи
Кашни ҫул шеп ешерет.

Вӑй хуратӑп савӑнса,
Мӗн пур ӗҫ пырать ӑнса!
Сӗт ӗҫетӗп кашни ир –
Хӑратаймӗ мана чир.

Тав туса ват ӗнене
Пан улми эп ҫитереп.
Юратса асаттене
Пиллӗкпе ҫеҫ вӗренеп.

# ĂСТАÇĂ

Аннене, эх, пулăшса
Çум çумларăм тăрăшса.
Кăпкалатрăм йăрана –
Тап-тасах умри ана!
Тытрăм аллăма витре –
Пĕчĕккĕ вăл, пит хитре.
Ачашларĕ çил питрен,
Пытăм пус патне тӳрех...
Шыв тултартăм витрене –
Сăнăм ӳкрĕ шыв çине,
Витрене аран йăтса,
Куркапа тăр шыв ăсса,
Эп шăвартăм купăста!
–Ӳссен пулăн эс ăста,–
Терĕ кăмăллăн анне.
Тĕршĕнтĕм те ун çумне,
Вараларăм шур тумне!
Çук, вăрçмарĕ вăл мана.
– Пар-ха,– терĕ,– аллуна.
Уçрĕ мăнă сумкине,
Парнелерĕ пукане!



## БУКВАРЬ

Вăтăр çичĕ сас палли
Пурăнаççĕ букварьте.
«А» – пĕрремĕшĕ, асли»,–
Терĕ çирĕппĕн тете, –
«Я» вара чи кĕçĕнни
Çакă туслă çемьере».
Çук халь эпĕ пĕлменни –
Букваре вулам тепре.
...Вăтăр çичĕ сас палли –
«Туссемпе» тĕнче тулли!



В

## ВĂРМАН



Чĕр чунпа вăрман пуян –
Пурăнать кунта куян,
Чее тилĕ, ват пăши,
Кашкăр, пăсара, шăши,
Чакак тус, куккук, ăсан,
Тĕлĕнĕн пырса курсан –
Этем тусĕ вăл – вăрман.
Чакалать çĕре ăман.
Пĕр тухать те пĕр кĕрет –
Кăпăшка çĕр пултăр тет,
Сар чечекĕ ӳстĕр тет,
Хĕвел евĕр çиçтĕр тет...
Упа-упа-утаман
Уткалать кунта хуçан.
Вăл татса çиет çырла –
Ĕнĕрлет ырла-ырла.
Йывăçа такка-такка
Хурт шырать ула такка!
Йывăç тăрринче пакша
Мăйăра катать шак-шак.
Вăрăм майлă сăр тăрна
Патша евĕр курăнать,
Вăл та савать вăрмана.
Шавваскать вăл çырмана,
Шапасем çиет тытса,
Эх, ташлать хăй савăнса...

# Г

## ГЕОРГИН

Графина шыв тултаратăп,
Чечексем ак шăваратăп:
Георгин, герань, гвоздика...
– Пулăшам-и?– терĕ Вика.

Ăмăртсах эпир ĕçлетпĕр,
Астрăна шыв ĕçтеретпĕр.
Геацинт та кĕлчечек —
Ялкăшаççĕ вут куç пек.

...Мĕн тери хитре вĕсем —
Эп ӳстернĕ чечексем!



## ДИВАН

Пӳлӗмре ларать диван,
Ун ҫинче выртма аван.
Ман кушакӑм пит наян –
Кунӗпех канать паян...

Пырса лартӑм юнашар,
Тытрӑм кушака вӑр-вар.
– Сан валли пур манӑн шар,
Выляса пӗрле чупар!

Мӑр-мӑрук вылять хавас,
Ялт сикет диван ҫинчен.
Шӑм-шака унпа авас,
Килте тунсӑхлӑ пӗччен!



## ЕНЧĔК

«Ик енчĕкре – ик шăрçа,
Пин тенкĕпе сутмастăп»...
Уй-хирте ӳсет пăрçа –
Куç хӳрипе сăнатăп...



...Енчĕк тупсăмне пĕлсем.
Мĕн вăл? Вăрттăн пĕлтерсем...
Пĕлмесессĕн хам калам:
– Икĕ куçăм – ман тупрам.



## ЁНЕ

Ир-ирех тăрать анне,
Аллине тытать витре.
Картишре кĕтет ĕне,
Пурнăç техĕмĕ – сĕтре.

Пулăшатăп аннене –
Калаçатăп ĕнепе:
– Нумайрах эс пар сĕтне,
Пирĕн пур пĕчĕк «Пепе».

Тутлă сĕт вăл юратать,
Çу çиет, ĕçет уйран.
Атте çавине туптать –
Йăтăп курăк эп уйран...

Тăрăшатпăр çемйипех –
Тутă пулăн эс ялан.
Сĕт ĕçетпĕр кунĕпех –
Ĕнепе кун-çул аван.

## ЖИРАФ

Африкăра пурнать жираф!
Шур пĕлĕте пуçпа тытать.
Саваннăна сăнать жираф,
Хăй тăрăхне вăл юрататъ.
Вăл тăрăшсах çиет апат –
Чи çӳллĕ йывăçа авать.
Турат ӳкет пăт-пат, пăт-пат –
Жираф пире салам ярать.



3

# ЗООЛОГИ ПАРКĔ

Зоологи паркĕнче
Пултăм эпĕ кунĕпе.
Мĕн тери пуян тĕнче –
Эп паллашрăм тилĕпе.

Эп туслашрăм зебрăпа,
Мулкачпа та упапа,
Зубрпа, крокодилпа,
Кăйкăрпа та тăрнапа...



Чĕр чунсем кунта нумай:
Упăте, жираф, пăлан,
Ягуар та попугай,
Арăслан, çĕлен, кабан...

...Туслăн пурăнар пĕрле
Çĕр çинче те тӳпере –
Ирĕн-каçăн, сĕм çĕрле
Чĕр чунпа тĕнче хитре!

И



## ИККӖ

«И»пе пуҫланакан сӑмах нумай,
Вӗрен эс вӗсене, Илле, пӗрмай:
Илем, икерчӗ, иксӗлми, итле,
Ирпи, Иван, Ирхи, имен, имле...

Сӑмах – чӗлхе пуянлӑхӗ, пӗлсем,
Чӑваш кӗнекине ална илсем.
Вула та ҫыр, туслашӑн «пиллӗкпе»,
Нихҫан та ан вӗрен эс «иккӗпе».

## ЙĂМРА

Çырмара ӳсет йăмра,
Шав сăнать шыв юххине,
Вуллипе суллать умра,
Эп тимлеп ун юррине.

Ял илемĕ эс, йăмра,
Хӳтлĕхпе савăнтаран.
Ачасем, ав, сан тавра –
Ăсталаç шăхлич тăмран!

Тытрăм аллăма тăмра,
Юхтăр кĕввĕм тĕнчене.
Мухтанап санпа, йăмра,
Хӳхĕмлет Чăваш Ене!



Пур пирĕн ула ĕне,
Ир-ирех сума чĕнет.
Йăмрасем ҫинчи курак,
Кăшкăрать, ав:«Тырă ак!»

Ĕҫлеме эпир ăста.
Ӳстеретпĕр купăста,
Кăшман, кишĕр, вĕт сухан...
– Ывăнтăн-и? Выртса кан,–
Ир те каҫ «юрлать» автан.
– Ҫырмара ишет ҫăрттан,
Пахча тулли – хурлăхан,
Сывлăх пултăр сан та ман!



Тытрăм кĕрепле алла,
Утрăм эп вăрманалла,
Утă тавăртăм паян,
Ҫук, ӳсместĕп эп наян!!!

...Ан хăра манран калта,
Пулмăп саншăн эп тăшман.
Хыттăн чупăн эс малта –
Туслăн выльăпăр ялан!!!

## КАЛТА

Йăпăр-япăр вĕт калта
Тарчĕ курăк айĕпе.
Ҫунă ҫумăр шеп ялта,
Курăк айĕ йĕп-йĕпе.
Эп шеллерĕм калтана –
Ҫуккă унăн кил, ана.
Пурăнать вăл пахчара,
Вăрманта та ҫырмара...

Пĕчĕкскерĕн ҫук туссем,
Ун кун-ҫулĕ пит кичем.
– Шăккалат ăна сĕнсем,–
Терĕ шӳтлесе пиччем.
Эпĕ вара – ял ачи,
Ҫĕр улми – пахчи-пахчи.
Картиш тулли – кăвакал,
Сурăх-качака сахал.

И-ИЧ 281
Национальная библиотека ... Республики

# КУКАМАЙ

Кукамай, юратнă кукамай,
Ĕҫӳсем, чăнах та, сан нумай.
Ир-ирех хутатăн кăмака,
Куршакпа лартан унта яшка.

Кукамай, юратнă кукамай,
Чăлхасем ҫыхатăн пĕрехмай,
Эс мана саватăн чĕререн,
Чирлесессĕн сим пылпа сиплен.

...Кукамай, юратнă кукамай,
Сан пата ҫитме тупатăп май.
Йышăнсам эс ăшă саламсем,
Пирĕн ҫемьерен — сар розăсем.

Кукамай, юратнă кукамай,
Кăшт выртса канма шыра эс май,
Юптарса эп парăп юмахсем,
Сан валли ҫеҫ юрлăп юрăсем.



# КУКАÇИ

Шур сухаллă кукаçи
Шуçăмпа пĕрле тăрать.
– Кукаçи, эс пăтă çи,
Вăй-хал хăвăрт хушăнать.

Анне пăтă пĕçерет,
Вир кĕрпи сĕте ярса.
Кукаçи çу хатĕрлет
Кашăкне умне хурса.

Кантăкран шаккать шевле
Çĕн кунпа саламласа.
– Асампа чунна тĕрле,
Çи пăтта эс ырласа.

Кукаçи, санпа ирех
Эп те тухăп пахчана.
Кахалланмăп эп текех,
Мухтасам хăв мăнукна.

Кукаçи, тавах сана,
Вĕрентетĕн ĕçлеме,
Чечекленĕ пуш ана,
Курса савăн илеме...



## ЛАШАЛЛА

Çумăр хыççăн урамра
Эп вылярăм лашалла.
Лăнчăрт! турĕ ман ура,
Ӳкрĕм эп лачакана.
Унталла та кунталла
Шуçрăм çеç кана-кана.
Лăх-лăх-лăх кулаç туссем:
– Сыснаран та эс хура!
Какалаççĕ шур хурсем:
– Илемпи – чăн-чăн хурах!!!

– Эх, лекет халь аннерен!–
Кулянатăп чĕререн.
Тăханнăчĕ çĕн кĕпе –
Хуп-хура халь, йĕп-йĕпе!

Лăпăстатрăм эп киле
Пылчăка силле-силле.
Выльăп лашалла ыран,
Тухсан хĕвел тухăçран...

...Халь вĕçтерĕп мунчана,
Çăвăнма таса шывпа
Кĕрсе ларăп эп чана...
Ĕçĕп чей кайран пылпа.



## МАСМАК

Масмак çыхнă асанне,
Масмак юратать анне,
Масмак çыхăп эпĕ те!
Масмак çыхмĕ ман тете.

Пит илемлĕ пуç çыххи,
Хитрелетĕ пуçăма.
Пилĕк çинчи пиçиххи –
Сапăрлатĕ ман тума.

Тĕрлĕ тĕслĕ шăрçапа,
Шуррипе, хĕп-хĕрлипе
Ăсталарĕ ман аппа,
Тĕр тĕрлерĕ сар çиппе.

Кĕмĕл-кĕмĕл тенкĕсем
Хӳхĕмлетрĕç масмака.
– Асамат пекех тĕссем, –
Пахаларĕ мăн акка.

Чăваш тумĕ пит аван.
Шеп тухьяллă сар хĕрсем.
Хушпу, енчĕк те сурпан
Кăмăлласçĕ арăмсем.

Ама, хӳре, шӳлкеме,
Алка, тевет, мăй çакки
Селĕмлетеç илеме.
Чаплă-çке улах сакки.

Çум çыххи те пулĕ ман,
Сарă çыхăп пилĕке.
Тĕлĕнĕн мана курсан,
Кĕрĕп санăн тĕлĕке.

...Чăваш пурăннă ĕнер,
Чăваш пурăнĕ ыран.
Упрар йăла-йĕркене,
Йăх йывăççине ан ман.



# НУХРАТ

Нухрат тесе калаççĕ
Чăн кĕмĕл укçана.
Нухрат тĕрри тĕрлеççĕ –
Сыхлаççĕ йăлана.

Нухрат вăл – вĕтĕ тенкĕ,
Чӳк тунă кĕмĕлпе.
Алка, чăн та, черченкĕ
Нухратлă тенкĕпе.

Вĕт тенкĕ пит илемлĕн
Ялтрать тухья çинче.
Сăнатăп питĕ тимлĕн,
Хĕвел – куçăмсенче.

Чăваш йăли-йĕркийĕ
Упраннă авалтан.
Чăвашлăхăн тĕркийĕ
Ан сӳтĕлтĕр нихçан...



## ОРДЕН

Орден пур мăн асаттен,
Çапăçнă вăл вăрçăра,
Орден пур ват асаннен,
Тăрăшнă вăл та тылра.

Хăваланă тăшмана
Асатте хĕç-пăшалпа.
Сухаланă анана
Асанне тур лашапа.

Çĕнтерӳ кунне кĕтет
Асатте тусĕсемпе.
– Орденсем çакам-ха,– тет,–
Юнашар медальсемпе.

Асанне те тăхăнать
Вĕр çĕнĕ шур костюмне,
Кăкăрĕ çине çакать
Çĕнтерӳçĕн орденне.

Юрататăп вĕсене,
Ыталатăп чуп туса.
Хатĕрлетĕп эп парне –
Асăнмалăх, тав туса.





## ПĂТĂ

Пĕчĕкçеççĕ шăллăма
Анне пăтă çитерет.
Кĕçтук пĕлмест чăмлама,
Пŭрнине кăна ĕмет.

Пăтăпа вăл варалать
Пит-куçне те аллине,
Анне пачах тарăхмасть –
Чуп тăвать тур паллине.

Ăмсанатăп Кĕçтука,
Мĕншĕн эпĕ пĕчĕк мар?
Тытрăм пысăк кашăка:
– Аннем, мана пăтă пар.

Р

## РУЛЬ

Ту-ту-ту, ту-ту-ту! –
Пăрăн хăвăртах умран.
Ту-ту-ту, ту-ту-ту! –
Эп водитель, хăв куран.
Ту-ту-ту, ту-ту-ту! –
Таптаса каяп сана.
Ту-ту-ту, ту-ту-ту! –
Эп васкатăп вăрмана.
Ту-ту-ту, ту-ту-ту! –
Пулăшатăп аттене.
Ту-ту-ту, ту-ту-ту! –
Утă кирлĕ ĕнене.
Ту-ту-ту, ту-ту-ту!
Тутлă сĕт ĕне парать,
Ту-ту-ту, ту-ту-ту!
Ал-ура ӳсме васкать.



# СЛОН

Слонсем – мăнă чĕр чунсем,
Пурăнаççĕ Индире,
Пысăк вĕсен хăлхисем,
Кăмăллаççĕ çут ире.

Тултараç шыв çăвара,
Пĕчĕк ача пек вара
Сирпĕтеççĕ пĕр-пĕрне
Сулласа хоботсене.

Джунглире вĕсем хуçа –
Хăрамаççĕ никамран.
Хупмăп эпĕ те куçа –
Зоопаркра тĕл пулсан...



## ÇĂЛТĂР

Чăрăш тăрринче çут çăлтăр –
Ялтăрать вăл йăлтăр-йăлтăр.
Хěл мучи, ав, юнашар –
Аллинче асамлă шар.

– Çăлтăр, çутăл! – кăшкăратпăр,
Юрăсем шăрантаратпăр.
Килчě-çитрě Çěнě çул –
Юмахпа, кун-çулăм, тул!

Сăвăсем хěрӳ калатпăр,
Селěм ташăсем ташлатпăр.
Юр пике парать парне,
Тăрăшсах шăлать тарне.



Çутă çăлтăр йăлтăр çунтăр!
Такăр çул пире вăл сунтăр!
Хěл мучи, эс сывлăх сун...
...Сив кунсем нумай вěт ун!

Т

## ТУПРА

Арчара выртать тупра:
Шур кӗпе, шӑрҫа, тура,
Пукане, алсиш, чӑлха,
Шур мулкач – хӑрах хӑлха!

Силемпи, килсем часрах!
Йӑл куллу ялан асрах.
Арчана пӗрле уҫар,
Парнесем унта тупар.

Шур кӗпе эс тӑхӑнсам,
Ҫиелтен шӑрҫа ҫаксам.
Теттесем илсем ална,
Нарпие чӗн хӑнана!



## УЛА ТАККА

Ула таккана çынсем
Вăрман тухтăрĕ тееççĕ.
Шикленеç кăпшанкăсем –
Аякка унран тараççĕ.

Кунĕн-çĕрĕн вăл таккать,
Хурт-кăпшанкă пуçтарать.
Пулĕ сывă ват вăрман,
Хăратаймĕ вĕт тăшман.



## ӲХӖ

Ӳхӗ пурнать вӑрманта,
Ӳхлетет хутран-ситрен,
Чӗр чунсене хӑратать
Кунсерен те каҫсерен...

Ҫунаттисене сарса
Питӗ хӑвӑрт вӑл вӗҫет.
Ӗлкӗрӗр часрах тарса –
Ӳхӗн ҫиесси килет!



Ушкăнра вăл чи ăсли,
Чи тĕпли, чи илемли.
Ячĕ унăн пит хитре,
Каласам ăна тепре.
Фа, фа, фа, фа, фа, фа, фа –
Вăл пуриншĕн те «Фафа».
Ми выртать ун умĕнче,
Соль ларать ун хыçĕнче.
Ля ăна алне сулать,
Ре пуçне хитрен таять.



## ФА

До, ре, ми, фа, соль, ля, си –
Эп вулатăп чарăнми,
До, си, ля, соль, фа, ми, ре –
Хăшĕ тăрать черетре?
Çичĕ сасă нотăра,
Çичĕ паллă ушкăнра.
Пурăнаççĕ туслашса,
Пĕр-пĕрне шав пулăшса.
Хăть малтан эсĕ вула,
Хыçалтан эсĕ вула –
Фа тăрать чи варринче,
Нотăсен хĕм чĕринче.

Си сăмах чĕнме хăрать,
До вĕт юнашар тăрать.
Чи асли вăл, чи сумли –
До çăра уççин хуçи.
Ячĕсем кашнин аван,
Çичĕ нота – пĕр тăван.

...Паллаштартăм туссемпе
Аппана та тетене,
Пĕчĕкçĕ Кĕçтентине,
Аттене те аннене.
Ăсталанă кĕвĕпе
Савăнтарăп çемьене!!!

Х

## ХĔВЕЛ

Хĕвел çиçет тӳпере,
Уçлăхра хĕвел – пĕрре!
Вăл пуриншĕн те анне –
Чĕм кĕртет чĕр чунсене.

Хĕвел ури сĕртĕнет –
Ачапча йăл-йăл çиçет.
Савăнаççĕ тусăмсем –
Çитрĕç ырă сар кунсем.

Юр юрлаççĕ кайăксем
Хĕвеле саламласа.
Хĕпĕртеççĕ чечексем
Ешĕл çулçăсем çурса.

Ешереççĕ пахчасем,
Тĕвĕленнĕ улмуççи.
Пулă тейĕн тусăмсем,
Юхан шывĕ – чун уççи.

...Хĕвелпе пĕрле тăрсан,
Ир те каç пин ĕç тусан
Пулăн тутă эс ялан,
Ĕмĕр пурăнăн пуян!



Ц

## ЦИРК

Атте, анне, эп, аппа
Кайрăмăр паян цирка.
Куртăмăр хура упа –
Чăнласах та вăл парка.

Купăс каласа ташлать,
Вĕрен тăрăх хăпарать,
Саламлать пуçне тайса,
Ыранах курăр кайса.

Савăк клоун шав шӳтлет!
Ăш хытиччен култарать.
Кахалсене вăл питлет,
Упăтерен хăй тарать...

«Шапито» сăмах мĕнне
Халь пĕлетĕп эп аван,
Пуçтарать вăл хăй ăшне –
Циркра пурте тус-тăван.



## ЧĂВАШ ЕН

Чăваш Енĕм, эс чипер!!!
Пул пуриншĕн те кĕпер!
Туссене пĕрле пухам,
Çĕр-шывпа паллаштарам.

Çĕр çинче эсĕ пĕрре,
Маншăн питĕ, пит хитре!
Чи чапли эс тĕнчере,
Пурăнатăн чĕрере!

Анлă Атăл хĕрринче
Чи илемлĕ сăрт çинче
Сарăлса выртать хула –
Вăл мана чĕнет çула.

Тĕп хуламăр Шупашкар,
Аллуна часрах эс пар!
Эпĕ çитрĕм Шăхальтен,
Эп килмерĕм ахальтен...

Пултăм Атăл хĕрринче.
Çут çанталăк паркĕнче
Кĕр! кĕрлерĕ Акатуй,
Савăнтарчĕ «çурхи туй»!!!

Пурăнаç Чăваш Енре
Харсăр чунлă улăпсем.
Куллисем çут шевлерен –
Çĕр çинчи çут çăлтăрсем!!!

Андриян чи маттури –
Парăнтарчĕ уçлăха...
Çăмăл пулчĕ ун ури –
Сумлăх кӳчĕ халăха.

Спортсменсем те – пыр та кур,
Ăмăртаççĕ пит правур.
Олимп тăвĕ ним те мар –
Медальсем çакаççĕ кар!

Чăваш Ен, сан ятупа
Çĕр пин юрă янăрать.
Пин-пин çын тăвать тупа –
«Чăваш пулнă, пур, пулать»...



# ЧĂВАШ АЧИ

– Эсĕ – кам?
– Чăваш ачи!
Çут пуласлăхăн калчи!
– Пул эс харсăр та маттур.
Пур ĕçре те пул сатур!
Тăрăшса, ачам, вĕрен,
Ăс вăл – шанчăклă вĕрен!
Çут тĕнче – ик аллунта,
Чăн телей эс туп унта!
Хĕç витмен хастар пуçа –
Пул ялан ăста хуçа!



Ш



## ШĂНКĂРАВ

Йĕс шăнкăрав аякран
Йыхăрать мана шкула.
Эп утап аран-аран,
Туртать сумка ман хула.

Кĕнеке сумка тулли,
Ăс пухма шкулаваскатăп,
Ӳссен пулмăп ял кулли –
«Пиллĕкпе» çеç туслашатăп.

Щ

## ЩЕТКА

Щетка тытрӑм эп алла,
Тасатам-ха пушмака.
Каялла та малалла –
Кив пушмакӑм яп-яка.

Ялтӑрать вӑл аякран,
Урама тухса чупам.
Кӗрӗп киле кӑштахран,
Хырӑм, хӑвӑртрах выҫсам!

Анне кукӑль ӑсталать
Кишӗртен, купӑстаран.
Хӑнана аппаваскать,
Инҫетрен, Шупашкартан.

...Сӗтел хушшинче пӗрле
Лартӑмӑр кукӑль ҫисе.
Ҫутӑ сӑмавар кӗрлет,
Юрӑ «юрлать» вӗресе!



# Ъ

Хытăлăх палли чĕнмест,
Калаçма пачах пĕлмест.
Пуçне пĕкнĕ, çывăрать,
Тутлă тĕлĕксем курать.

Тĕлĕкре – çут ĕмĕтре,
Çӳллĕ тӳпере вĕçет–
Карнă çырана тĕтре,
Лаша тутлăн кĕçенет.

Хытăлăх палли сисет,
Кирлĕ вăл сăмахсене.
Кашнине ятран пĕлет –
Хытарать хăшне-пĕрне.



Ы

# ЫРАШ



Уй-хирте ӳсет ыраш,
Ăш çилпе вăл чӳхенет.
Чуста йӳçĕ паш та паш –
Хура çăкăр шеп пиçет.

Пин пучах – тĕшши пин-пин –
Хĕвелпе тутлăланать.
Шăнкăрав янрать тин-тин!
Çулпала лав чуптарать.

Ăшă çумăр, ав, çăвать
Ыраша шеп шăварса.
Асамат кĕпер карать
Тӳпере йăлтăраса.

Выльăх-чĕрлĕх улăхра –
Хĕлле пулĕ тутлă аш.
Тăрăшатăп çырмара,
Туса лартрăм эп шалаш.

Чĕнĕп çĕрле туссене
Лашасемпе выртмана.
Итлĕп ыраш юррине –
Парăп юрласа сана!



# Ь

Çемçетӳ палли пуртан
Савăнать мĕн пур сăмах.
Пулас çук вĕсем пĕр тан,
Кашни – патша, çут ахах.

Пĕри çемçен янăрать,
Тепри хыттăн илтĕнет.
Çемçетӳ мăнаçланать:
– Мана сас палли чĕнет!!!

Çемçетӳ палли куштан,
Кăкăрне çапать тан-тан!
– Эпĕ,– тет вăл, – чи чапли,
Чи хитри те чи палли!!!



## ЭРЕШМЕН

Эрешлет хӑй картине
Эрешмен мачча ҫинче.
Эрне ҫыхрӗ чӗнтӗрне,
Хӑй пытанчӗ варринче.

Айван шӑнасем нумай,
Пӳлӗмре вӗҫеҫ пӗрмай.
Часах лекӗҫ тыткӑна,
Эрешмен кӗтет «хӑна».

Чее чунлӑ эрешмен
Эрешленӗ ҫурт-кермен.
Яр уҫӑ чӳречерен
Лӗпӗш кӗчӗ – пит черчен!

Ҫунатти сап-сарӑ ун –
Илемленчӗ сӑрӑ кун.
Эп шеллерӗм лӗпӗше
Чупрӑм хыҫҫӑн ӗшенсе.

– Пулмӑн эрешмен «хӑни»,
Тӑрӑнтармӗ ун сӑнни,
Лармӑн эсӗ тӗрмере,
Ирӗкре вӗҫ – тӳпере!



Ю

## ЮМАХ

Юн кун тăтăм ир-ирех,
Çырас терĕм юптару...
«Юман ларать чиперех,
Юля ыйтрĕ каçару.

Юрă юхать тӳпене,
Юшкăн витнĕ çĕр питне,
Юла «ташлать» ташшине,
Кушак çăвать, ав, питне.

Юр ирĕлет васкаса,
Юрай шăтать çуркунне.
Ывăнтăм каса-каса,
– Вылясам,– сĕнет анне.

– Юхăм, юшкăн, юрату,
Эс, аннем, мана чуп ту.
Пит ачашшăн ытала,
Юратап тесе кала.

Юбилей çитет часах,
Кӳршĕри Юркка пуçтах.
Юбкă тăхăнăп паян,
Юрăç пулăп эп ыран...

Юпа лартать асатте,
Юнашар тăрать атте,
Юхан шывĕ кĕр! кĕрлет,
Вĕлле хурчĕ сĕр! сĕрлет...»

Çырас терĕм юптару –
Пулса тухрĕ суптару.

...Патăм юмах юптарса,
Шăхвăртса та йăл кулса.
Ан çӳре манран тарса,
Калаçар чунпа тулса...



Кукăль ăсталап тăмран,
Тăвап салма чустаран,
Пĕçереп яшка малтан,
Савăта çăвап кайран.

Эх, правур-çке эп паян,
Калаçатăп пит япшар.
Маттур пулăп эп ыран,
Пулмăп нихçан янавар.

Анне шав мухтать мана:
– Хĕрĕм ĕçчен ўсет,– тет, –
Яшпи, тавтапуç сана!
Эс пуртан ĕçлес килет!!!

## ЯШПИ

Чăваш ячĕсем нумай:
Илемпи, Атнер, Элпи,
Эп шутлатăп пĕрехмай:
Пăлхарпи, Этнер, Силпи.
Салампи, Айтар, Нарспи,
Сывлăмпи, Сетнер, Сарпи,
Асамат, Айпи, Юман,
Пинерпи, Ятмал, Ятман,
Ямансар, Янтуш, Алман,
Пинеслу, Актай, Патман...



Юратап чăваш ятне,
Ят хурап пуканене,
Янăрать вăл чăвашла.
– Яшпи, савăкрах ташла!

Эп вылятăп кунĕпе
Тусăмпа-пуканепе!
Юр юрлатпăр халь пĕрле,
Тĕрĕсем тĕрле-тĕрле.

# ЧĂВАШ ПУЛНИПЕ МĂНАÇЛАН

Чăваш пулнипе мăнаçлан,
Чăваш ăсĕпе эс мухтан.
Хунсен йăхĕнчен эс, тăван,
Çакна нихăçан та ан ман!

Чăваш тĕррисем сывлăм пек
Куçа илĕртеç пир çинче!
Тухья, эрешсем çăлтăр пек –
Илемлĕ, чăваш, çут тĕнче!

Чăваш юррисем ылтăн пек
Тĕнче юррисем хушшинче.
Чăваш ташшисем кĕмĕл пек
Тĕнче ташшисем çумĕнче.

Атте-аннерен сумли çук,
Хакла яланах вĕсене.
Тăван кĕтесрен хитри çук,
Лартсам çырмара вĕрене.

Тăван халăхран асли çук,
Тăван халăхна хисепле!
Тăван чĕлхерен пахи çук,
Чĕлхе кĕввине эс тимле!

Чăваш чĕлхине эс вĕрен,
Унпа тĕнчене эс кĕрен.
Йăла-йĕркене эс упра –
Вăл саншăн та маншăн – тупра!

100.90


Г
Щ
Ж
Р
У
Ф
Ӑ
Э
Ш
Ӳ
Б
Й
В
Н
Ё
Ы
Ю
П